

*Митта Ваçлейĕн пултарулăхĕ – халăх пуянлăхĕ. Вăл яш ĕмĕре упрама, çамрăк вăхăта сая ярасран сыхланма, ăслă, хăюллă, маттур пулма вĕрентет. Кам Митта кĕнекине алла илет, вăл чăн-чăн поэзи пылакне туханса пăхать.*

Алексей Талвир, чăвашсен паллă писателĕ

## «СĂВАПЛĂ ЯТ» ВИКТОРИНА

Поэт, прозаик, куçаруçă тата критик Митта Ваçлейĕ (1908-1957) чăваш литературинче паллă йĕр хăварнă. Унăн пултарулăх еткерĕ пуян. Сăмах ăстин паха хайлавĕсене шкулта вĕренеççĕ, тишкереççĕ. Сăввисем ачасене шухăшлама, тăван чĕлхене юратма, илемлĕхе туйма, таса чун-чĕреллĕ пулма пулăшаççĕ.

Чăвашсен аслă ăру поэчĕ Митта Ваçлейĕ çуралнăранпа 2018 çулхи пуш уйăхĕн 5-мĕшĕнче 110 çул çитет. Хисеплĕ çыравçăн çуралнă кунне паллă тума пĕтĕм чăваш тĕнчи хатĕрленет. Юратнă поэта сума суса эпир те **«Сăваплă ят»** викторина йĕркелес терĕмĕр. Ăна ирттерекенсем: «Чăваш наци конгресĕ» регионсен хушшинчи общество организацийĕн вĕренӳ комитечĕ, Чăваш Республикин наци библиотеки, «Хыпар» Издательство çурчĕн литературăпа культура тата искусство «Тăван Атăл» журналĕпе чăваш ачисен «Тантăш» хаçачĕ. Литература вăйăйине Чăваш Республикин тата Раççей Федерацийĕн тăрăхĕсен шкул ачисене, профессипе техника училищĕсенче, колледжсемпе техникумсенче вĕренекенсене, аслă шкул студенчĕсене, çамрăксене, учительсемпе библиотека ĕçченĕсене, Митта Ваçлейĕн пултарулăхне юратакансене пурне те хутшăнма чĕнетпĕр.

Викторина хуравĕсене компьютерпа А4 форматлă шурă хут листи çине ***Alt пусмалли Times New Roman шрифтпа, 12 №-лĕ пысăкăшĕпе, 1,5 йĕрке хушшипе,*** пур енчен те ***хĕррисене (поля) 2 см*** хăварса пичетлесе **2018 çулхи нарăс (февраль) уйăхĕн 28-мĕшĕччен «Митта Ваççлейĕн конкурсне»** паллăпа çак адреспа йышăнаççĕ: электрон почти: congress21@maill.ru

428032, Чăваш Республики, Шупашкар хули, Воробьев композиторсен урамĕ, 10 çурт, Чăваш наци конгресĕ. Телефонсем: 62-35-61, 62-82-05

**Вăйă ăмăртăва хутшăнакансем!** Ыйтусене хуравласа çырнă ĕçĕрте хăвăрăн хушамата, ята, аçу ятне, ăçта тата миçемĕш класра (курсра) вĕреннине е ĕçленине, шкул е кил адресне чăвашла тата вырăсла çырма ыйтатпăр. Çĕнтерӳçе тата призерсене чи тĕрĕс те тулли хуравланисенчен палăртăпăр, вĕсене Чăваш Республикин наци библиотекин дипломĕпе чыслăпăр, хушамачĕпе ячĕсене «Тăван Атăл» журналпа «Тантăш» хаçатра пичетлĕпĕр. Викторинăна хутшăннисене Чăваш наци конгресĕ хатĕрленĕ сертификата парăпăр.

Пĕтĕмлетӳпе чыслав Чăваш Республикин наци библиотекинче иртĕ. Чыслава хăçан ирттерессине ятарласа пĕлтерĕпĕр.

***Геронтий НИКИФОРОВ,Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ, викторина йĕркелекен комитет пайташĕ***

**Ыйтусем:**

1. Василий Егорович Митта мĕнле кил-йышра ӳссе ҫитĕннĕ?

2. Литература тĕпчевҫисем Митта Ваҫлейĕн пултарулăхĕн ҫулне темиҫе тапхăра уйăрса пăхаҫҫĕ. Геннадий Юмарт поэт тĕпчевҫĕ Митта Ваҫлейĕн пултарулăхĕн ҫулне миҫе тапхăра уйăрнă?

3. 18 ҫулхи Митта Ваҫлейĕ ҫывăх тусĕ патне янă ҫырура: «Эпĕ ҫав ĕҫе, чăваш халăхне малалла ярас йĕркене, нихăҫан та, хамăр ĕмĕр иртсе каймасăр та пăрахас ҫук», – тесе каланă. Ҫамрăк поэт ҫак тупа сăмахĕсемлĕ ҫырăва кам патне яма пултарнă?

4. Василий Митта чăваш ялĕсенче пĕрлешӳллĕ хуҫалăхсем – колхозсем – йĕркелени ҫинчен поэма ҫырнă. Ăна автор 1930 ҫулта «Сунтал» журналта мĕнле ятпа пичетленĕ? 1932 ҫулта ҫав хайлав тепĕр хут урăх ятпа ҫапăнса тухнă. Поэмăн иккĕмĕш ятне те калăр.

5. «Чăваш ҫыравҫин Митта Ваҫлейĕн ырă сăнарне мĕн ĕмĕрĕм тăршшĕнче те манса каймашкăн тивĕҫĕм ҫук. Митта хама пирĕшти пек тĕл пулнă чух мана тӳсме ҫук йывăрччĕ, кун-ҫулăм татăлас вĕҫнех ҫитнĕччĕ. Ваҫлей мана шăпах выҫă вилесрен хăтарчĕ...», – тенĕ культ тапхăрĕнче, Тăван ҫĕр-шывăн аслă вăрҫи вăхăтĕнче Миттапа пĕр лагерьте пулнă пĕр паллă ҫын. Василий Егоровичăн ҫынлăхне хакласа калаканăн ятне, вăл хăш халăх ҫынни пулнине калăр.

6. Культ самани ҫинчен чăваш ҫыравҫисем чылай ҫырнă. Вĕсен йышĕнчи пĕр хисеплĕ ҫыравҫă Митта Ваҫлейĕн шăпине тĕпе хурса паллă хайлав пичетлесе кăларнă. Унта репресси вăхăтĕнчи лару-тăрăва сăнласа кăтартнă. Ĕҫ-пуҫ 1937-1947 ҫулсенче Чăвашра тата Ҫĕпĕр ҫĕрĕнче пулса иртет. Хайлав ятне тата авторне калăр.

7. Митта Ваҫлейĕ пĕр сăвăра поэзие ырă сунакан виҫĕ хăват пуррине каланă. Поэтăн сăвввин ятне тата виҫĕ хăват ячĕсене ҫырăр.

8. Вырăссен аслă поэчĕн Александр Пушкинăн пĕр сăввине Николай Шупуҫҫынни, Аркадий Ĕҫхĕл, Митта Ваҫлейĕ – пурте уйрăммăн куҫарнă. Митта Ваҫлейĕ куҫарнин чăвашла ятне калăр.

9. Шупашкарта тата Чăваш Республикинче Митта Ваҫлейĕ ячĕпе ҫыхăннă вырăнсем, ятсем пур. Вĕсен шучĕ ултта яхăн. Поэт пурăннă тата ун ячĕпе хисепленекен вырăнсене калăр.

10. Василий Егорович Митта 1957 ҫулхи ҫĕртме уйăхĕн 10-мĕшĕнче вилнĕ, 12-мĕшĕнче ҫĕре кĕнĕ. Поэта хăш ял ҫăвине (масарне) пытарнă? Унăн вилтăпри ҫине лартнă палăк ҫине ҫырса хунă тăвата йĕркеллĕ сăвă ҫаврăмне ҫырăр, ăна мĕн ятлă хайлавран илнине калăр.